Коммунизм

# Ҫӗнтерӳ ҫулӗ

1930 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнчен тухать

электронлӑ адрес: print@vurnar.cap.ru

Вӑрнар район хаҫачӗ

2011 ҫул нарӑс/февраль/ уйӑхӗн 5-мӗшӗ

шӑмат кун

13-14/10331/ №

Хакӗ ирӗклӗ

## Кӑтартуллӑ ӗҫе – пысӑк хак

«Александр» тулли мар яваплӑ общество директорӗ Андрей Пушнев «2010 ҫулхи Чӑваш енри чи лайӑх ҫамрӑк предприниматель» конкурс ҫӗнтерӳҫи пулса тӑнӑ

**ТӖСЛӖХ**

**Асӑннӑ организаци Чӑваш Республикин экономика аталанӑвӗн, промышленность тата суту-илӳ министерстви ирттернӗ конкурсра ҫӗнтерни ӑнсӑртран мар. Юлашки вӑхӑтра вӑл хӑйӗн аталану хӑватне ӳстерчӗ. Кунта ҫӗленӗ тавар ҫӗр-шыв рынокӗнче тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнчӗ.**

«Александр» тулли мар яваплӑ общество Вӑрнарта хӑйӗн производствине йӗркелесе янӑранпа сакӑр ҫул ҫитрӗ. Ҫак вӑхӑтра вӑл панкрута тухнӑ «Рассвет» ҫӗвӗ фабрикин ӗҫне тӑсрӗ кӑна мар, районти ӗҫ рынокӗн пысӑк шанӑҫӗ пулса тӑчӗ.

Районти кӗҫӗн тата вӑтам предприятисенче пӗтӗмпе 1625 ҫын вӑй хурать. 18,5 проценчӗ – «Александр» предприятире. Кунта тимлекен 32 ялти 300-е яхӑн ҫынран нумайӑшӗ ӗҫсӗр юлнӑ хыҫҫӑн ҫӗвӗҫ профессийӗпе туслашнӑ. Кадрсем пурте ҫирӗп «суйлав» витӗр тухнӑ.



● *А.Пушнев (сылтӑмран – пӗрремӗшӗ) хӑнасене производствӑпа паллаштарать.*



Ӗҫлекенсен вӑтам ӳсӗмӗ – 35 ҫул, 15 кунхи вӑтам ӗҫ укҫийӗ 5 пин те 310 тенкӗпе танлашать.

80 ытла модель, ҫирӗп материал, пахалӑхлӑ ҫӗлев... Производство вырӑнта тӑманни цехсене хӑватлӑ оборудованипе ҫирӗплетнинчен, ӗҫ графикне тухӑҫлӑ ӗҫлеттернинчен те аван курӑнать.

Ҫӗвӗ цехӗсенче тӑтӑшах модернизаци тата реконструкци ӗҫӗсем пыраҫҫӗ. Юлашки икӗ ҫулта предприятин тӗп фончӗ 3 миллион тенкӗлӗх ҫӗнӗ оборудованипе пуянланнӑ. Пӗлтӗрхи ҫулла-кӗркунне производство лаптӑкне пысӑклатас тата ӗҫ хатӗрӗсем вырнаҫтарассипе калӑпӑшлӑ ӗҫ пурнӑҫланӑ. Предприяти пӗтӗмпех энергие перекетлес системӑпа ӗҫлет.

Иртнӗ ҫул кунта 18,5 миллион тенкӗлӗх тумтир ҫӗлесе сутнӑ. Ҫӗвӗ фабрикинчен тавар курттӑмӑн ӑсанать. Уйрӑм предпринимательсем урлӑ вара хӗрарӑм тумтирӗ хамӑр пасарсенче те тӗл пулать. «Айсберг» ярлыкла «пиҫсе» тухакан тавар ҫинче ӑна Вӑрнар поселокӗнче туса кӑларни тӳрех паллӑ.

«Александр» тулли мар яваплӑ общество районти ӗҫсӗрлӗх шайне лайӑхлатма пулӑшнипе пӗрлех патшалӑх хыснине пуянлатассине те палӑрмалла тӳпе хывать. Иртнӗ ҫул ака пур шайри бюджетсене пӗтӗмпе икӗ миллиона яхӑн налук хывнӑ.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

## Олимпиадӑра палӑрнӑ

Висӗм кун республикӑри ял хуҫалӑх предприятийӗсен агрономӗсем хушшинче иртнӗ олимпиадӑна пирӗн районти виҫӗ уй-хир ӑсти хутшӑннӑ.

Вӑрнарти аш-какай комбиначӗн тата «Агрохмель» тулли мар яваплӑ общество агрономӗсем Владимир Антонов тата Вячеслав Алексеев, район администрацийӗн ял хуҫалӑхӗпе экологи пайӗн тӗп специалист-эксперчӗ Владимир Нарышкин – виҫҫӗшӗ те призерсен йышне лекнӗ. Пӗрремӗшсем кӗмӗл призерсем пулса тӑнӑ, В.Нарышкин виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ.

Олимпиада Чӑваш патшалӑх ял хуҫалӑх академийӗнче Чӑваш Республикин ял хуҫалӑх министерствипе «Август» Фирма пуҫарӑвӗпе иртнӗ. Унта уй-хир ӑстисем пӗтӗмпе 53-ӗн хутшӑннӑ. Хӑйсен пӗлӗвне ҫирӗплетни-тӗрӗсленипе пӗрлех агрономсем «Августӑн» ҫӗнӗ препарачӗсемпе паллашнӑ, энергие перекетлес технологиӗри ӳсен-тӑрансене хӳтӗлес вырӑнӗ тата вӑрлӑх пахалӑхне ӳстерессипирки пынӑ анлӑ калаҫӑва хутшӑннӑ.

**С.СВЕТЛОВА.**

**КОСМОНАВТИКА ҪУЛӖ**

## План ҫирӗплетнӗ

Вӑрнар район тӗп библиотеки тата ял тӑрӑхӗсенчи вулавӑшсем Космонавтика ҫулталӑкне тата Юрий Гагарин тӗнче уҫлӑхне тухнӑранпа 50 ҫул ҫитнине халалласа 2011 ҫулта пурнӑҫламалли мероприятисен планне ҫирӗплетнӗ. Унӑн тӗллевӗ – Раҫҫей космонавтики ҫинчен ҫырнӑ хайлавсене вулама хавхалантарасси, патриотизм туйӑмне вӑйлатасси, тӗнче уҫлӑхне парӑнтаракансемпе мӑнаҫланма вӗрентесси. Планпа килӗшӳллӗн буклетсем кӑларма, кӗнеке куравӗсем йӗркелеме палӑртнӑ. Мӗн пур мероприяти вӗрентӳ учрежденийӗсемпе, обществӑлла организацисемпе тата массӑллӑ информаци хатӗрӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса иртӗ.

**Хамӑр инф.**

## Выльӑх-чӗрлӗх усракан – тулӑх пурӑнакан

**Выльӑх-чӗрлӗх хисепне тытса пыракан уйрӑм ҫынсене те сӑвакан кашни ӗнешӗн субсиди уйӑрса панине ырламалла. Районӗпе илсен кӑтарту ҫапларах – апат базине ҫирӗплетме 5108 пуҫ ӗне валли патшалӑх укҫа-тенкӗ уйӑрать.**

**ХУШМА ХУҪАЛӐХ**

«Пӗлтӗрхи тип ҫанталӑка пула курӑк лайӑх ҫитӗнмерӗ. Ҫавӑнпа ялта пурӑнакансене выльӑх апачӗ туянма укҫа парса пулӑшни вӗсене ӗҫлеме хавхалантарать, – терӗ Шӗнер Ишек ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Виктор Романов. – Пирӗн енче 218 пуҫ ӗне валли субсиди илме 174 ҫын заявлени ҫырнӑ. Хӑшӗ-пӗри икӗ-виҫӗ ӗне те усрама хевте ҫитереҫҫӗ».

Чӑрӑш Ишекри ӗҫченсем – Светланӑпа Геннадий Смирновсем – мӑйракаллӑ шултра выльӑх 5 пуҫ тытаҫҫӗ. Ҫав шутран виҫҫӗшӗ – сӑвакан ӗнесем. Шӗнер Ишек ял тӑрӑхӗнчи хушма хуҫалӑх тытакансенчен Элӗк, Пӑрачкав районӗсенчи уйрӑм предпринимательсем сӗт туянаҫҫӗ. Ир-ирех продукцие 16 тенкӗпе пуҫтараҫҫӗ, каярахпа – 15 тенкӗ те 50 пуспа. .

Хирпуҫ ял тӑрӑхӗнче виҫшер ӗне усракансем: Георгий Романов (Рункӑ), Инна Давыдова (Хирпуҫ), Роза Сидорова (Уравӑш). Вӗсем кашни ӗне пуҫне пӗрер пин тенкӗ илӗҫ. Пӗтӗмӗшле ку тӑрӑхра патшалӑх пулӑшӑвне илме 205 ҫын заявлени ҫырнӑ, 245 ӗнешӗн субсиди килмелле.

Мӑн Явӑш ял тӑрӑхӗнче пурӑнакансем ӗҫ пурнӑҫ тытать тенине тӗпе хураҫҫӗ. Кунти ӗҫсӗр граждансем хушма хуҫалӑха аталантарма бизнес-план хатӗрленӗшӗн тавӑрса памалла мар субсиди илнӗ. Пуҫаруллӑ ҫынсем – Ҫӑкаллӑ Явӑшри Людмила Бычковапа Виталий Владимиров, Станислав Иванов, Мӑн Явӑшри Геннадий Языков. Вӗсем выльӑх-чӗрлӗх йышлӑ усраҫҫӗ. Акӑ, сӑмахран, Людмила Бычковапа Виталий Владимировӑн ҫемйисенче тӑватшар ӗне тытаҫҫӗ, сӗте ятарлӑ аппаратпа сӑваҫҫӗ. Мӑн Явӑшри Петр Самаровӑн кил хуҫалӑхӗ те пысӑк: мӑшӑрӗпе 5 пуҫ таран ӗне усрама вӑй ҫитереҫҫӗ. «Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессипе тухӑҫлӑ ӗҫлекен ял ҫыннисем тимлӗхре пулнишӗн савӑнатӑп. Ара ялта пурӑнакан – пурне те тӑрантаракан-ҫке вӑл. Мӑн Явӑш ял тӑрӑхӗнчи 181 ҫын 228 ӗнешӗн субсиди илмелле», – ҫирӗплетрӗ ку ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Андрей Васильев.

**Е.ТИКИНЕВА.**

## Чи пысӑк парӑмҫӑсем – патшалӑх компанийӗсем

**Раҫҫейри корпоратив парӑмӗн 20 проценчӗ – патшалӑхӑн «Газпром», «Роснефть», ВТБ компанийӗсен. Ҫӗр-шыври чи пысӑк 15 парӑмҫӑ списокӗнче пӗтӗмпе патшалӑхӑн 8 компанийӗ.**

## ҪАНТАЛӐК

| | Вырсарни кун 5.02 | Тунти кун 6.02 | Ытлари кун 7.02 | Юн кун 8.02 |
|---|---|---|---|---|
| кӑнтӑрла | -6 | -12 | -13 | - 11 |
| ҫӗрле | -7 | -13 | -20 | - 15 |

*«Метеоновости» информаци агентствин информацийӗ тӑрӑх.*

